◆ Юмах ятăм – юптартăм Порфирий АФАНАСЬЕВ

# Кучченеç



Çурхи хĕвел темерĕн çав: асамлă пайăркисемпе тĕкĕннĕ-тĕкĕнменех – лĕштĕр! ирĕлсе пусăрăнать вăрманти юр. Ăшă, ырă. Вăрăм хӳре-чакаксем йывăçсем çинче пĕр чарăнмасăр пакăлтатаççĕ, мулкачсем алла-аллăн тытăнса хурама тавра ташша пикеннĕ, кăсăясем пĕр-пĕринпе ăмăртса сăвă калаççĕ.

Çуркунне çитнипе пуринчен ытла Ула такка хĕпĕртенĕ иккен. Типсе хăрнă йывăç суйласа илнĕ те шак! та шак! тутарать хăйĕн шĕвĕр сăмсипе. Янраса çеç тăрать вăрман.

Шаккасан, шаккасан илтех кайрĕ хайхи – ăна такам чĕнет. Камах пултăр? Хăйĕн кӳрши – Пакша.

– Пĕтĕм вăрмана шăв-шав çĕклетĕн, мана çывăрма памастăн, – терĕ вăл кăмăлсăррăн.

– Ха-ха, хĕл каçа çывăрса тăранман, – кулать Ула такка. – Тух-ха пĕрле савăнăпăр. Курмастăн-им, çуркунне çитнĕ!

– Тупнă мĕнпе савăнмалли. Маншăн тесен... Вăт çу кунĕсенче çырла та, мăйăрĕ те туллиех. Çуркунне мĕн? Шывĕ çеç нумай. Çĕре анатăн – ура йĕпенет, чирлесе ӳкме пулать. Çук, çуллаччен тухмастăп, Ула такка.

– Э-э, эсĕ питĕ тутлине юрататăнçке, – кулса илчĕ Ула такка.

– Юрататăп çав, – тунмарĕ Пакша.

Апат пирки сăмах тапратнăран Ула такка хăйне пĕр сивĕ хĕл Пакша мăйăрпа сăйланине аса илчĕ. Пулăшрĕ ăна йывăр вăхăтра вăрăм хӳре, вăл пур ун çинчен чутах манса кайман. Капла юрамасть.

– Итле-ха, тăванăм, – терĕ Ула такка, – эп сан валли кучченеç хатĕрлетĕп, ас тивĕн-и?

– Эй, мухтанать те. Ăçтан илĕн? – тĕлĕнчĕ Пакша.

– Халех мар. Упа хăйĕн шăтăкĕнчен тухсан эп сан патна каллех вĕçсе килĕп, – терĕ те шĕвĕр сăмса малалла вĕçтерчĕ.

Тепӗр эрнерен юр лупашкасемпе ҫырма-ҫатрара ҫеҫ тӑрса юлчӗ. Тата та хавасланчӗ вӑрман. Пакша та текех хӑвӑлне кӗме васкамарӗ, турат ҫинчен турат ҫине сикрӗ.

Пӗр ирхине ватӑ хыр айӗнчи ҫапӑ купи йӑшӑлтатса илчӗ те, ун айӗнчен лӑпсӑркка Упа мӑраланса тухрӗ.

Курах кайрӗ Пакша Упана, тӳрех Ула такка сӑмахне аса илчӗ. Хӑвӑртрах кучченеҫ тутанса пӑхас килчӗ унӑн, вара вӑл шӗвӗр сӑмсана шырама васкарӗ. Сахал ҫӳрерӗ-и, нумай-и – илтех кайрӗ паллана сасса. Ларать Ула такка ватӑ ӑвӑс ҫинче, шак-шак-шак! тутарать сӑмсипе – турпас ҫеҫ вӗҫет аяккалла.

– Сывӑ-и, Ула такка!

– Э, вӑрӑм хӳре, эсӗ-ҫке, – савӑнчӗ хайхискер. – Эп пур хам вӗҫсе пыма шутланӑччӗ-ха сан патна.

– Эпӗ, Ула такка, малтан каланӑ хӑвӑн сӑмахна аса илсе килтӗм-ха. Пылак апат ҫиес килет-ҫке.

– Акӑ ас тивсе пӑх-ха эппин, – терӗ Ула такка хурӑн хуппи ҫумне шӑнса ларнӑ пӑра кӑтартса.

– Мӗн ку? – тӗлӗнчӗ Пакша.

– Пылак кучченеҫ.

Пакша пӑра асӑрхануллӑн ҫуласа илчӗ. Вӑт тӗлӗнтермӗш! Шутсӑр пылак!

– Мӗнле-ха капла, хурӑн ҫинче пӑрлӑ канфет ӳсет-им? –ыйтрӗ Пакша.

– Кӑна, тӑванӑм, эпӗ каҫран шӑтарса хӑвартӑм. Хурӑнтан тутлӑ сӗткен юхнӑ та шӑнса ларнӑ. Вӑт сана пылак канфет пулчӗ те, – терӗ Ула такка.

*Мария АРЛАН*

## *Пирӗн пултарулӑх*

# НАШЕ ТВОРЧЕСТВО

## *Весенние мелодии*

Весна, весна,
Ты так чудесна!
Ручей журчит,
Песня звучит.
Птицы
прилетают,
Подснежники
цветут.

***Кристина АСТРАХАНЦЕВА,***
***5 класс.***



*Катя САРБАЕВА, 10 лет.*
*ЧР, Марпосадский район,*
*Карабашская начальная школа.*

Прыгают по лужам детки,
Ползут по травке муравьи.
Летят над домами грачи,
Кругом зажурчали ручьи.

***Марина ЕРШОВА,***
***5 класс.***
ЧР, г. Чебоксары,
СОШ № 27.



*Женя КРАСНОВА, 8 лет.*
*ЧР, Чебоксары,*
*СОШ №27.*